45-90
3696

Аркадий Ĕçхĕл

# ТИМУР ТУСĔСЕМ



Чăвашгосиздат-194.

*Ачасем! Çак кĕнекере сире мĕн кăмăла кайни, мĕн килĕшменни çинчен, тата сирĕн малашне мĕнле кĕнекесем ытларах вулас килни çинчен çырса пĕлтерĕр.*

*Пирĕн адрес: г. Чебоксары, Дом Печати, Чувашгосиздат.*



# Çĕнтерÿ çулĕ

Кавказран — Карпата çитиччен,
Карпат урлă татах малалла!
Атăлтан — Вислăна çитиччен,
Висла урлă татах малалла!
Тăшмана шăтăка чикиччен,
Гитлера мăйĕнчен çакиччен
Пирĕн çарăн малтан малаллах каймалла!

Кавказ сунчĕ пире вут-чĕре,
Атăл сунчĕ пире аслă çул:

Çĕршыв ывăлĕ, çак тĕнчере
Паттăртан паттăрри эсĕ пул!—
Çак пилпе ĕмĕртен ĕмĕрех
Эпир хамăр юратнă çĕре
Мăшкăла кăларман, кăларассăмăр çук!

Çул параççĕ пире шыв-шурсем,
Пуç таяççĕ пире сăрт-тусем,
Йыхăраççĕ пире тăвансем:
— Арасланăмăрсем, килĕрсем!—
Хĕрлĕ Çар малалла пынăçем
Йăлтăраççĕ çынсен куçĕсем,
Вăй илсе чĕрĕлеççĕ ялсем, хуласем.

Ĕмĕрсен çĕнтерӳ сулйĕрне
Пирĕн вилĕмсĕр маршал хывать.
Кĕтесрен кĕтессе тĕнчере
Янăрать пирĕн хурçă хăват.
Хĕрлĕ Çар тăшмана çĕннĕрен
Пĕтĕм çĕр чĕрĕлет çĕнĕрен,
Вăл тата ирĕкрехххĕн те аслăн сывлать.

Кавказран — Карпата çитиччен,
Карпат урлă татах малалла!
Атăлтан — Вислăна çитиччен,
Висла урлă татах малалла!
Берлина çĕмĕрсе кĕриччен,
Ирсĕрсен йăвине ишиччен
Хĕрлĕ Çарăн малтан малаллах каймалла!

1944.



## Кремль

Васкавлă поезд кĕрлесе
Çитсессĕн Мускава,
Çулра ĕшеннĕ чĕресем
Хавассăн хускалаç.

Сан кăкăрна вĕри тулать,
Хумхатакан вĕри.
Сан умăнта — аслă хула,
Тăван çĕршыв чĕри.

Пин тĕрлĕ сасăпа кĕрлет,
Юрлать хăй юррине.
Эс пĕтĕм халăхпа пĕрле
Чăматăн çĕр айне.

Алра сан пĕчĕк чемодан,
Эс килнĕ ялтанах.
Ниçта лармасăр, чи малтан,
Ларатăн метрона.

Çиçсе тăрать сан умăнта
Тĕлĕнмелле тĕнче.
Çитсе анатăн самантах
Свердлов площадĕнче.

Кунта эс каймăн аташса,
Сана, мĕншĕн тесен,

Кĕтсе илеççĕ ялкăшса
Кремль çăлтăрĕсем.

Татах, татах сан кăкăрна
Килет-çке вĕри хум, —
Вĕсем вĕт тăчĕç сан умна
Паян малтанхи хут.

Вырнаçиччен пĕр-пĕр çĕре
Çак аслă Мускавра,
Эс хумханса утса çӳрен
Кремль йĕри-тавра.

Утатăн эс, сан чĕрере —
Шухăшпала телей.
Мухтавлă Хĕрлĕ площадьре
Куратăн — мавзолей.

Унта Ильич канса выртать,
Улăп йышши этем.
Тулта, хурал пек, шăпăртах
Тăраççĕ чăрăшсем.

Пыратăн эс, чăваш ачи,
Шутлатăн эс тăрса:
— Эп кам кулли пулаттăм-ши,
Ильич пулман пулсан?!.

Пулсассăн та пулаттăм тен
Суккăр кĕслеçĕ çеç...
Анчах та халĕ ав çӳлтен
Çут çăлтăрсем çиçеç.

Пăхатăн эс Кремль çине,
Çут çăлтăрсем çине.
Вĕсен çути пур тĕнчене
Кĕрешĕве чĕнет.

Пăхатăн эс Кремль çине...
Унти пĕр пӳлĕмре
Çулпуç тăвать халăх ĕçне,
Тусĕсемпе пĕрле.

Пыраççĕ аслă Кремле
Çĕршыв геройĕсем;
Çулпуç итлет тĕлĕнмелле,
Пит чаплă хыпарсем.

Вӑл питӗ ӑшшӑн кӑмӑллать
Кашни ыр хыпара.
Унтан геройсене каллах
Заданисем парать.

1944



## Тимур тусĕсем

Амĕш чирлине пула
Клава пырайман шкула.

Класра пăхнă унăн-кунăн —
Клава вырăнĕ пушах.
Ăнсăртран инкек-тем пулнăн
Пурте кайнă шухăша.

Мĕнле пулчĕ-ха капла вăл?
Нихăçан апла пулман.

Урокран пĕр кун та Клава
Çакăн пек тăрса юлман.

Яланах вĕреннĕ лайăх,
Пурте пăхнă тĕлĕнсе.
Нихăçан пулман пĕр айăп
Тăван шкулĕ умĕнче.

Вăл — примерлă пионерка,
Ун тетрадĕнче ялан:
Арифметика — пятёрка,
Çутçанталăк та — пятёрка.
Географи те — пятёрка,
Йĕркипех çапла пятёрка,
Йĕркипех çапла аван.
Анчах мĕн пулчĕ паян?
Мĕнле пулчĕ-ха капла вăл,
Килеймерĕ пирĕн Клава?
Клава вырăнĕ пушах,
Пурте кайнă шухăша.

Клавăн чун пек тусĕ — Вера
Тăчĕ те хуллен кăна:

— Амăшĕ чирленĕ, — терĕ, —
Питĕ йывăр Клавăна...

— Мĕн тăвас? —
Тет пĕр сас.
— Пулăшас! —
Терĕ класс.

Туслăх пур, хаваслăх пур.
Вася — чи хастар Тимур, —
Çав кунах урок пĕтсессĕн,
Пухрĕ хăй командине.
— Пурнăçра йывăр килсессĕн,
Манар мар-ха пĕр-пĕрне.
Каймалла пурин те пирĕн
Пулăшмашкăн Клавăна. —
Вăл çапла каларĕ çирĕп,
Фронтовик пек чăн-чăнах.

Ак вĕсем пыраççĕ вуннăн —
Чи маттур тимурçăсем.
Клава курчĕ те: — Мĕн пулнă? —
Шухăшларĕ тĕлĕнсе.

Кăртах сикрĕ ун чĕри те,
Хирĕç тухрĕ тулалла.
Куç тулли куççулĕ витĕр
Хăй çапах та кулкалать.

— Клава, — терĕ тусĕ Вера, —
Сана йывăр, çавăнпа
Ачасем ак килес терĕç
Пулăшмашкăн ушкăнпа.

Шăлнусем пĕчиккĕ санăн,
Аçу çапăçать фронтра.
Халь анну те сывсăрланнă,
Пар пире ĕç хăвăртрах!

— Ой, ачсемĕр! — терĕ Клава,
Ыталарĕ Верăна. —
Мĕнле савăнăç капла вăл,
Пăрахман эсир мана!

Туслăх пур, хаваслăх пур.
Вася — чи хастар Тимур:
— Вăхăта сая ямасăр,
Тытăнар-ха, — тет, — ĕçе.

Сăмаха кайран калаçăр,
Пире пар-ха кĕреçе.

Пĕррепе сахал. Вĕçтерĕр,
Илсе килĕр кӳршĕрен.
Çĕрулми текех кĕттермĕ,
Тăм ӳкет вĕт каçсерен.

Туслăх пур, хаваслăх пур.
Вася — чи хастар Тимур,
Приказне кĕскен çеç пачĕ —
Тупрĕç виçĕ кĕреçе.
Ак вара тимур отрячĕ
Тытăнчĕ хĕрӳ ĕçе.
Акă виççĕн кăлараççĕ,
Иккĕн çĕрулми пухаççĕ,
Иккĕн нӳхрепе тултаççĕ:
Вĕлт те вĕлт! иртет витре.
Виççĕшĕ вара пӳртре
Типтерлеççĕ пит хитре.
Клава та кунта пĕрле —
Пулăшнишĕн хĕпĕртет.

Ай-хай ĕç, хĕрӳллĕ ĕç,
Хĕрсе пырĕ хĕрнĕçем.
Çак маттур тимурçăсем
Тем те тăвĕç, ывăнмĕç,
Такăнмĕç те пӳлĕнмĕç,
Чăн гвардеецсем вĕсем!

Клава амăшĕ выртать,
Ерипен кăшт ахлатать.
Итемре ĕçленĕ хыççăн
Ĕçнĕ сивĕ шыв вăл.
Ун тавра тăраççĕ виççĕн —
Виçĕ пĕчĕк ывăл.

Кĕписем вĕсен хуралнă,
Пичĕсем те тасах мар.
Тĕлкĕшет темле хурланнăн
Вĕсен куçĕнчи кăвар.
— Çавăнпа часрах, кал-каллăн
Тасатар-ха, ачашлар!
Асса килчĕ пирĕн Тася
Тăрă шыв тарасаран.

Хурампа ак ăшăтаççĕ,
Селĕм кĕлтăрри тăваççĕ,
Пултăр, теççĕ, тасарах.

Клава кĕпесем пухать,
Вера вĕсене ухать.
Тася урайне çăвать,
Дуся ытти ĕç тăвать.

Кăвакал пекех хăй тĕллĕн,
Питĕ ырă пулнăран,
Клавăн чи пĕчĕкçĕ шăллĕ
Алхасать таканара.

Чăпăл-чăпăл, шăпăл-шăпăл
Çăвăнать те тасалать.
Шурă та таса кĕпе вăл
Праçникри пек тăхăнать.
Амăшĕн çакна курсассăн,
Чуне питĕ савăнать.
Çăмăлраххăн, хавасраххăн,
Сывăраххăн вăл сывлать.

Пӳрте кӗҫӗ хӗвел сӑнӗ
Йӑлтӑр-йӑлтӑр выляса.
Пӗтӗм пурнӑҫ халь — вӗр-ҫӗнӗ,
Сывлӑш уҫӑ та таса.
Туслӑх пур, хаваслӑх пур.
Вася—чи хастар Тимур—
Пахчара командӑлать:
— Хӑвӑртрах!—тет,васкатать.

Ҫут кӗреҫесем выляҫҫӗ,
Виҫӗ паттӑр кӑлараҫҫӗ,
Иккӗн улмине пухаҫҫӗ,
Иккӗн нӳхрепе йӑтаҫҫӗ,
Вӗлт те вӗлт! иртет витре.
Виҫҫӗшӗ вара пӳртре
Типтерлеҫҫӗ пит хитре.
Клава та кунта пӗрле—
Тусӗсемшӗн хӗпӗртет.

Тӗттӗмччен ҫапла ӗҫлерӗҫ,
Вӗсем ывӑннӑ темерӗҫ.

Тепӗр кун вара ирех
Пурнӑҫ карӗ чиперех.
Ҫапла, туслӑха пула,
Пычӗ Клава та шкула.

1944.



## Ачасемпе тихасем

Тихасем курас шутпа-и
Е ахаль кăна çул майăн,
Петя пулчĕ пĕринче
Хăй колхозĕн витинче.

Аслă конюх Асламасов
Пĕчĕкçĕ пионера
Кĕтсе илчĕ шарламасăр,
Темĕнле кăшт мăннăнрах.

Анчах Петя çухалмарĕ
Аслă конюх умĕнче.

— Мухтанмашкăн пит ир мар-и?—
Шухăшларĕ ăшĕнче.

Унтан Петя, пуçлăх тейĕн,
Пăхрĕ шалалла кĕрсе.
Кунта курчĕ вăл: кичемлĕн
Тĕлĕреççĕ тихасем.

Куçĕсем вĕсен тĕтреллĕ,
Усăк мĕскĕн пуçĕсем.
Урамра тĕпĕртетмелĕх
Вăй та çук пек халь вĕсен.

Çăмĕсем шалт вараланчăк,
Тасатмаççĕ вĕсене.
Петя çак тихасене
Курчĕ те пит пăшăрханчĕ.

Унтан аслă конюха
Вăл каларĕ:—Ну, пăх-ха,
Эс, юлташăм Асламасов,—

Ман çынсем пек каласассăн,—
Ĕçÿсем сан япăх-ха!

Калаçу нумай пулмарĕ;
Кану кунĕ çитсенех,
Килсе кĕчĕ витене
Ачасенĕн шавлă çарĕ:
Шăп вунçичĕ пионер.
Пычĕç хăйсем тĕллĕн çеç,—
Тихасем шалт тĕлĕнчĕç.

Ĕç пуçланчĕ кĕрлесе,
Пăх та кур çеç!
Хăшĕ тытрĕ кĕреçе,
Хăшĕ—хыркăç.
Хăшĕ—щётка, хăшĕ—хачă,
Хăшĕ—шурă алшăлли.
Кашниннех ĕçлет алли.
Хыркăçлаççĕ, щёткăлаççĕ,

Якатаççĕ, çутатаççĕ,
Ачашлаççĕ те лăпкаççĕ.
Алшăллипеле шăлаççĕ
Тихасен куçĕсене.
Хачăпа касса юсаççĕ
Кăтрашка çилхисене.

Петя пирĕн тухтăр пек,
Санитари пултăр, тет.
Вăл кăрчанка имлеме
Тупнă витĕмлĕ эмел.

Нумаях та кун иртмерĕ,
Ĕç юсанчĕ пĕтĕмпех.
Килсе кĕчĕ-çке тирпейлĕх
Тихасен ăш витине.

Ак вĕсем пуçне çĕклерĕç,
Йăл. çуталчĕç куçĕсем.
Картишне тухсан чипер çеç
Ташласа çӳреç вĕсем.

Халь кашнийӗн кусӗнче
Йӑлтӑрать хавас тӗнче.

Аслӑ конюх ҫиленмерӗ,
Вӑл пӑхать кулкаласа.
Ҫапла пирӗн пионери
Усӑ пачӗ колхоза.

Конюх мухтаса каларӗ:
— Ай, маттур та ачасем!..
Пирӗн паттӑр утлӑ ҫарӑн
Пулччӑр ҫиҫӗм пек утсем!

Кашни вут пекех вылятӑр,
Кашни пултӑр урхамах,
Тӑшмана ватса таптатӑр,—
Ҫакӑ пултӑр ыр сӑмах!

1944.

## Сунарçă патĕнче

Елиххан мучи ялта
Ĕмĕрхи сунарçă.
Хăй килне вăл вăрмантан
Тем те пĕр куçарчĕ.

Тĕнчере пур миçе пин
Тĕрлĕ кайăк-кĕшĕк!
Елихханăн серепи,
Пĕр лексессĕн, хĕсĕк.

Кашни тĕрлĕ кайăка
Сăнаса пăхмашкăн—
Амантмасăр, лайăхах,
Вăл чĕрле тытасшăн.

Çапла унăн килĕнче,
(Ман килпе вăл хирĕç)
Каçса кайăн тĕлĕнсе,
Чăн-чăнах зверинец.



Хăй кулса вăл хăш чухне:
— Çук-ха,—тет,—леш слонĕ!..
Пухăнать экскурсине
Кунта пур районĕ.

Уйрăмах-çке мучине
Юрататъ шкул çарĕ.
Кунта зоологине
Вĕренме начар-и?

Тĕрлĕ представителе,
Зоологи тăрăх,
Эс куратăн чĕрĕлле,—
Ăçта курăн урăх?

— Урăх—Мускавра кăна,—
Тет мучи мăнаçлăн.
Кăтартма вăл тытăнать,
Ăçта мĕн вырнаçнă.

Акă тимĕр читлĕхре
Асав шăллă кашкăр.

Урăхла—тукмак хӳре,
Теççĕ ятламашкăн.

Кашкăр шăлĕпе шаккать,
Унăн-кунăн пăхкалать.

Кунта акă мăн упа,
„Пыл ăсти" ун ячĕ.
Ачасем ак ушкăнпа
Ун умне пыраççĕ.

Астараççĕ шăхăрса
Çирĕм тĕрлĕ саслăн.
Сахăр е канфет парсан,
Ташлама хавас вăл.

Малалла ак тилĕ тус—
Çута ылттăн тирлĕ.
Унтан кайрĕ хура юс,—
Унтан тĕрлĕ чĕрлĕх.

Таçта илтĕнет шăк-шак,
Малалла иртетпĕр:

Туратсем çинче пакша
Майăр шĕкĕлчет мĕн.

Калăн, тунă пружинран,
Вылянать шăмшакĕ,—
Ку сикет пирĕн умран
Чăрсăр хир кушакĕ.

Унтан акă пуçланать
Вĕçен кайăк пайĕ,
Ман чĕлхе те çыхланать,—
Миçе тĕрлĕ кайăк!

Эп нумайĕшне кунта
Ятне те калаймăп.
— Мучи, килсем, ăнлантар,
Çакă мĕнле кайăк?

— Ку пулать юман сăмса,
Çимĕçĕ ун—шĕкĕ,—
Ответлет вăл савăнса,
Кайăксен патши пек.

Елиххан мучин чăнах
Пит пуян зверинец.
Калаcа пама сăмах
Эпĕ çитереймĕп.

Ытах, пит курас килсен,
Пирĕн яла пырăр.
Ман мучи патне кĕрсе,
Хăвăр куçпа курăр.



## Çыру

Командир пичче, халь эпĕ
Пĕчĕкçĕ ача.
Вĕренме шкула çӳретĕп
Кăçалтан анчах.

Эс ăçтан пĕлме пултарăн
Ман пек чĕрĕпе.
Сан çинчен ак эп вуларăм
Тĕпĕ-йĕрĕпех.

Тăшмана эс шар кăтартнă
Бомба вучĕпе.
Çĕршывпа мана сыхланă
Тĕрĕс те чипер.

Эп шкула куллен çӳренĕ
Ӳркенме пăхман.
Ăнсăртран çеç пырса лекнĕ
Сана çав тăхлан.

Эсĕ халь выртан пуль акă
Шур палатăра.
Эп çыру çырап. Вула та
Вăй ил хăвăртрах.

Эс сывал, ман лейтенантăм,
Эсĕ ачаш мар.
Эп ӳссен санпа пĕр танăн
Тăрăп юнашар.

## Ответ

Пĕчĕк тусăм, çырăвна эп
Илтĕм чиперех.
Халь ответ ларса çыратăп
Пĕтĕм чĕререн.

Санăн саламу, тăванăм,
Мана вăй парать
Çавăн хыççăн ман суранăм
Тӳрленсех пырать.

Пĕчĕк тусăм, эп çунатăп
Хăвăрт сывалма.
Чунăмран сана сунатăп
Пысăк çын пулма.

Çулă тухнă эс, ан чарăн,
Ут малтан мала.
Хурçă хӳме пек мăн çарăм
Хӳтĕлет сана.

Нимĕнле вăй çĕмĕреймĕ
Унăн хăватне.
Аслă Маршал пире чĕннĕ
Çĕнтерӳ патне.

Çутă кун патне хăюллă,
Тусăмçăм, утар!
Эсĕ ӳсĕн, пысăк пулăн,
Пырăн юнашар.

1944.

Редактор С. Эльгер

НТ 00125 Подписано к печати 30/V-45. Зак. № 309
Объем 1,0 п. л. Тир. 5000 экз. Тип. № 1 Управл. полиграфпром.

при СНК ЧАССР, г. Чебоксары, Дом печати

ТУПМАЛЛИ

*Стр.*

Ҫӗнтерӳ ҫулӗ . . . . . . . . . . . . . . . . 1
Кремль . . . . . . . . . . . . . . . . . . 4
Тимур тусӗсем . . . . . . . . . . . . . . 9
Ачасемпе тихасем . . . . . . . . . . . . 18
Сунарҫӑ патӗнче . . . . . . . . . . . . 23
Ҫыру . . . . . . . . . . . . . . . . . . 29
Ответ . . . . . . . . . . . . . . . . . 31

Цена 1—50 коп.

*АРК. ЭСХЕЛЬ*

ДРУЗЬЯ ТИМУРА

На чувашском языке

ЧУВАШГОСИЗДАТ—1945